Ача шăпи – ашшĕ-амăшĕн аллинче

# Çемьерен пуçланать: телей те...

Çул çитмен çамрăксем тӳрĕ çултан ан пăрăнччăр тесе паян районти шалти ĕçсен сотрудникĕсемсĕр пуçне ытти обществăлла организацисем те нумай ĕç туса ирттереççĕ. Çав шутра районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ çумĕнчи диагностикăпа консультаци паракан центр та. Унăн ертӳçи Л.А. Верховцева çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комиссин иртнĕ ларăвĕнче каланă тăрăх, центр ытларах класс ертӳçисемпе ĕçлет. Сахал-им вĕсен хăйсен класĕсенчи ачасемпе калаçмалли темăсем? Шкулсенчи психологсемпе социаллă педагогсем те кашни ачапа уйрăммăн ĕçлессине тĕпе хураççĕ. Асăннă центр шкул ачисемпе тĕрлĕ темăсемпе ирттерекен çавра сĕтел хушшинчи калаçусем, тренингсем, ытти тĕл пулусем те вĕсене хутшăнакан çул çитмен çамрăксемшĕн усăллă иртеççĕ.

Анчах та воспитани çемьерен пуçланнине кам-ха хирĕçлесе калайтăр? Куллен çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси ларăвĕнче пăхса тухакан административлă ĕçсем те çакнах çирĕплетсе параççĕ.

Çул çитмен çамрăксем обществăлла вырăнта ӳсĕр çӳренĕ тĕслĕхсем пĕрре мар тĕл пулаççĕ. Иртнĕ ларура Çатракасси ял тăрăхĕнчен çеç çакнашкал 3 административлă ĕç пăхса тухмалла пулчĕ. РФ Право йĕркине административлă майпа пăсни çинчен калакан кодексăн 20.21 статйине пăснăшăн административлă майпа штраф тӳлеттерме йышăнчĕ комисси. Кун пек тĕслĕхе Муркаш тата Ильинка ял тăрăхĕсенче пурăнакан çул çитмен çамрăксен тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсем тĕлĕшпе те пăхса тухрĕç. Каласа хăвармалла, асăннă статьяна пăснăшăн, обществăлла вырăнта ӳсĕр çӳренĕшĕн 100 тенкĕрен пуçласа 500 тенкĕ таран штраф тӳлеттереççĕ е 15 талăк таранччен арестлеççĕ.

–Урама тухса кайсан, тем туса çӳреççĕ унта. Ăçтан пĕлес, – тет мăнукĕ пирки асламăшĕ.

Çемьери воспитанин тахăш сыпăкĕ татăлнă пулнă-ха хăй вăхăтĕнче? Çакăн çимĕçĕ ав нумай кĕттермерĕ. Ачасене воспитани парас ĕç çемьере чи малта пулмалли çинчен калать çакă.

Турай ял тăрăхĕнчи арçын ав мăшăрĕ çĕре кĕрсен ачисене ашшĕ ăшшине парса ура çине тăратма «вăй çитереймерĕ». Амăшĕпе пĕрлех вилчĕ ачисен телейĕ те... Шкул-интернатра пурăнакан икĕ хĕрĕшĕн алимент тӳлеме те шутламасть арçын. Çак сăлтавпа ирĕкрен хăтарнă пулсан та тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем туман вăл.

–Ĕç шыратăп-ха, – тӳрре тухма тăрăшать вăл. – Аслă хĕр ачи киле килесшĕн...

Хĕрĕн çак туртăмĕ ашшĕне хăйне, хăйĕн вăйсăрлăхне çĕнтерме пулăштăрах. Кĕçĕн хĕр ачин халь урăх ашшĕ, урăх амăшĕ ĕнтĕ. Усрава илчĕç ăна. Хăй айăпне пулах çухатрĕ арçын хăйĕн пĕр тăван тĕпренчĕкне. Çак тĕслĕх ачисен телейне ирĕк пурнăçпа, эрех кĕленчипе улăштарнă пĕр ашшĕне, пĕр амăшне те пулин тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тума пулăшсан тем пекехчĕ. Асăннă комисси кашни ларурах ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламан вуншар çынна пăхса тухать. Тăван ачисемшĕн хăйсем çĕр çинчи чи çывăх çынсем пулнине ăнланса илинччĕç вĕсем.

Çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси ларăвĕнче пăхса тухнă ĕçсенчен çакă та курăнать. Хулана вĕренме кайнă ял ачисем тĕлĕшпе, чăвашларах каласан, обществăлла вырăнта тула кайнăшăн милици ĕçченĕсем протокол çыраççĕ. Саккуна пĕлменни явап тытассинчен хăтармасть-çке. Куншăн вара 500 тенкĕрен пуçласа 1 пин тенкĕ таран штраф тӳлеттереççĕ.

Апла пулсан ачасемпе килте калаçмалли темăсем те нумай-ха пирĕн.

**Л. ПАВЛОВА.**

Ял çыннисене валли

# Çут çанталăкăн паха парни

***Ноябрь уйăхĕ вĕçленсе пырать. Хĕл кунĕсем те инçе мар. Пирĕнтен кашниех çак вăхăта тĕплĕн хатĕрленме тăрăшать. Апла пулин те хĕл кунĕсенче шăнса пăсăлассинчен, вируслă инфекци лекессинчен хăтăлма йывăр. Тепĕр енчен илсен, чир-чĕртен сыхланма, сывлăха упрама майсем çук мар. Пылпа пĕлсе усă курни çын организмне çирĕплетет.***

***Хальхи вăхăтра Муркаш районĕнче хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе аталантарассипе тăрăшаканпа çывăхрах паллаштарас кăмăлăм пур. Ку вăл – П.В. Семенова, «Хурт-хăмăр агентстви» уçă акционер обществин районти зоотехник-хатĕрлевçи. Полина Витальевна районти специалист-зоотехник пулса 9 çул тăрăшать. Вăл аслă пĕлӳ илнĕ, хурт-хăмăр пăхас ĕçе аван пĕлет.***

***П.В. Семенова хăйĕн патне пыракансене пурне те ăшă кăмăлпа кĕтсе илет, усăллă канашсем, сĕнӳсем парса пулăшма тăрăшать. Хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки хаваспах каласа пама килĕшрĕ:***

– Чи малтанах çавна каласа хăварас килет. Сахăрпа, унăн продукчĕсемпе танлаштарсан, пылăн пĕлтерĕшĕ те, усси те организмшăн çав тери пысăк. Унра этем организмне кирлĕ мĕн пур витаминсем пур.

Кăçал сутлăх пыл 7 тонна ытла туса илнĕ. Ку вăл пĕтĕмпех районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче. Пĕр çемье пуçне 11,4 килограмм пыл пулать.

Самантпа усă курса çак ĕçре пысăк кăтартусем тăвакансене, ырă ят çĕнсе илнисене те асăнса хăварнă пулăттăм. Вĕсен шутĕнче Мичурин яч. хис. чикĕллĕ яваплăхлă агрофирмăн В.И. Яковлев утарçи. Вăл хăйне çирĕплетсе панă 60 çемьерен кашниченех 25-шер килограмм пыл илме пултарнă. Çавăн пекех Ленин яч. хис., Ильич яч. хис., «Герой» хуçалăхсенчи хурт-хăмăр ăстисем те япăх мар кăтартусемпе палăрчĕç.

Çакна та палăртмалла. Ильич яч. хис., «Герой» хуçалăхсенче илепер курăкне акса çитĕнтереççĕ. Вăл пыл хурчĕсем валли паха апат пулса тăрать. Асăннă хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсем пыл туса илессин пĕлтерĕшне аван ăнланаççĕ, ку тĕлĕшпе пысăк пулăшу параççĕ.

Хальхи вăхăтра районти утарсенче хурт-хăмăр çемйисене хĕл каçарма хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ. Ытти çулсенче те çак ĕçсене тивĕçлĕ шайра туса ирттернĕ, çемьесене лайăх упраса кирлĕ пек хĕл каçарнă. Кăçал та утарçăсем çак тивĕçсене пĕлсе туса ирттерессе, пыл хурчĕсен çемйисене упраса хăварасса шанас килет.

Утарсем тытнин, тухăçлă пыл туса илнин пĕлтерĕшĕ пысăк. Тепĕр енчен илсен, çак ĕç валли электричество энергийĕ те, транспорт та, топливо та, выльăх вити те кирлĕ мар. Тăкаксем те пĕчĕк.

Пирĕн районта хуртхăмăр çемйисен шучĕ сахал мар. Вĕсем пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче те, уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче те йышлă. Унсăр пуçне пуçласа хурт-хăмăр усрама тытăнакансем те пур.

Палăртмалла, малтанхи вăхăтра утарçăсене сахăр песукне йӳнĕ хакпа панă, карас илме те йывăрлăхсем пулнă. Çавăнпа та вĕсем хуртхăмăр çемйисен йышне тĕрĕс кăтартнă. Халĕ вара утарçăсем пыл хурчĕсен çемйисен йышне сахалрах кăтартма тăрăшаççĕ. Те налук ытларах тӳлеме тивессинчен шикленеççĕ, те урăх сăлтавпа. Анчах та налук тĕлĕшпе шикленме кирлĕ мар. Хурт-хăмăр çемйисен шутне тĕрĕс кăтартни çак ĕçе районта лайăхрах аталантарма пулăшĕ кăна.

Пыл хурчĕсене ĕрчетессине, усрассине республикăри «Хурт-хăмăр агентстви» уçă акционер обществи йĕркелесе туса пырать. Районта кашни çулах вĕрентӳсем, семинар-канашлусем йĕркелет.

Астăватăр пулĕ, малтанхи вăхăтра пирĕн ĕç пӳлĕмĕ район администрацийĕн путвалĕнче вырнаçнăччĕ. Кирлĕ условисем пулман. Магазин та ячĕшĕн тенĕ пек кăна пулнă. Халĕ вара зоотехник-хатĕрлевçĕн пӳлĕмĕ – «Моргаушавтотехсервис» уçă акционер обществин кантур çуртĕнче иккĕмĕш хутра. Тирпейлĕх, хăтлăх малтанхи мар ĕнтĕ. Витринăсене кирлĕ пек вырнаçтарнă, мĕн пуррине пĕтĕмпех курма пулать. Шкафсене сăрланă, юсав ĕçĕсене туса ирттернĕ. Çынсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме майсем çук мар. Май килнипе усă курса çак ĕçсене туса ирттерме пулăшнисене пысăк тав сăмахĕ каланă пулăттăм.

Хурт-хăмăр продукцине чи малтанах чечек тусанĕ, çилĕм кĕреççĕ. Витринăра çаксемпе усă курса хатĕрленĕ тĕрлĕрен пылсем, маçсем, кремсем, бальзамсем, шампуньсем пур. Çынсен хăйсене кирлине кирек хăçан та килсе туянма пултараççĕ.

Çавăн пекех Муркашри хатĕрлев пункчĕ халăхран карас ăвăсне, çилĕм, кăвăрч, пергаллă карас йышăнать. Кунтах сахал апатлă çемьесем валли пыл хурчĕсене хĕл каçарма канди туянма пулать.

Пыл хурчĕсене пуçласа ĕрчетме тытăнакансем валли те пĕтĕмпех пур. Хурт-хăмăр çемйисемпе те тивĕçтеретпĕр. Килĕр, ӳкĕнмĕр.

**А. ЧЕРНОВА**
**çырса илнĕ.**

Объявление

## АДМИНИСТРАЦИЯ БОЛЬШЕСУНДЫРСКОГО СЕЛЬСКОГО ПОСЕЛЕНИЯ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

### извещает о проведении открытого аукциона

**Форма торгов** - открытый аукцион.

**Наименование аукциона** - открытый аукцион на право заключения договора купли-продажи на земельные участки, расположенные на территории Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, подлежащих приватизации в 2008 году.

**Заказчик аукциона** - Администрация Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

**Аукцион проводит** - Общество с ограниченной ответственностью «Юридическая фирма «Гарантия Права»

Место нахождения: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Почтовый адрес: 428000, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Номер контактного телефона: (факса) (8352) 28 - 29 – 89, +7 905 029 12 03

Адрес электронной почты: garantiaprava@mail. ru

**Предмет аукциона:** право заключения договора купли-продажи объектов недвижимого имущества, подлежащих приватизации в 2008 году, расположенных на территории Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

**Начальная (стартовая аукционная) цена:** начальная (стартовая аукционная) цена земельного участка определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

**Перечень объектов недвижимого имущества, расположенных на территории Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, выставленных на торги (аукцион):**

1. **Нежилое помещение Большесундырской сельской библиотеки общей площадью 155,7 кв.м. с инвентарным номером БТИ 2354 с земельным участком общей площадью 1500,00 кв.м. с кадастровым номером 21:17:060403:0026 (лот №1)**

Местонахождение объекта: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Анисимова, д. 4.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка -** 58000,00 (пятьдесят восемь тысяч) рублей.

**Срок, место и порядок предоставления аукционной документации.**

Документация об аукционе предоставляется по адресу: **Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, дом 35 «б».**

Срок предоставления: с 20 ноября 2008 года по 20 декабря 2008 года.

Порядок предоставления документации об аукционе: в электронном виде на основании заявления любого заинтересованного лица, поданного в письменной форме, в течение двух рабочих дней со дня получения соответствующего заявления.

Плата за предоставление документации об аукционе не взимается.

Заявки на участие в аукционе предоставляются по адресу:

**Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б».**

Сроки предоставления заявок: с 20 ноября 2008 года по 20 декабря 2008 года

**Обеспечение заявки на участие в аукционе.**

Размер обеспечения заявки на участие в аукционе составляет двадцать процентов начальной (стартовой аукционной) цены земельного участка.

Банковские реквизиты для перечисления денежных средств обеспечения заявки на участие в аукционе:

***ООО «Юридическая фирма «Гарантия права»***
***ИНН/КПП 2130007402/213001001***
***р/с 40702810300960000813 в Чебоксарском филиале ОАО «Банк Москвы»***
***к/с 30101810200000000767***
***БИК 049706767***
***Назначение платежа: залоговая сумма за участие в аукционе.***

**Место, дата и время проведения аукциона.**

Аукцион проводится по адресу:

**Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б».**

Время проведения аукциона: 22 декабря 2008 года 09 часов 00 минут по московскому времени.

***Директор ООО «Юридическая фирма «Гарантия Права» ДЕНИСОВ А.И.***

Специалист сĕнет

# Хурт-хăмăра ăнăçлă хĕл каçарар

Хурт-хăмăртан пыл ытларах илес тесен, вĕсене ăнăçлă хĕл каçарас пулать. Лайăх хĕл каçарнă пыл хурчĕсем çуркунне сывă пулаççĕ, чылай çăвăр ӳстерсе хăвăрт вăйланса каяççĕ. Кун пек хурт йышĕсем çу кунĕсенче пыл нумай пуçтараççĕ. Япăх хĕл каçнă пыл хурчĕсем вара час-часах чирлеççĕ, кирлĕ пек аталанаймаççĕ. Çавна пулах пыл сахал пуçтараççĕ е пачах та пуçтараймаççĕ.

Пыл хурчĕсем мĕнле хĕл каçнине хĕлĕпех сăнасатĕрĕслесе тăмалла, лайăх хĕл каçарма тăрăшмалла. Нумай çул хушшинче туса ирттернĕ тĕрлĕрен сăнавсем çакна кăтартса параççĕ: хуртсем ăнăçлă хĕл каçасси апат хисепĕпе унăн тутлăлăхĕнчен чылай килет. Вăтамран кашни стандартлă вăйлă йышлă çемье пуçне хĕл каçма пыл 25 килограмм таранах хăвармалла.

Апатпа пĕрлех хуртсене ăçта тата мĕнле хĕл каçарни те пысăк вырăн йышăнать. Ку тĕлĕшпе хурт-хăмăр ăстисем хушшинче пĕр пĕтĕмлĕ шухăш çук. Пĕрисем вĕллесене тулта юр айĕнче тытнине ырлаççĕ, теприсем вара хĕл каçарма ятарласа çуртсем тума сĕнеççĕ.

Пирĕн республикăри ял хуçалăх предприятийĕсенчи утарсенче хурт-хăмăр çемйисен 80 проценчĕ омшаниксенче хĕл каçать. Ыттисем вара юр айĕнче хĕл ирттереççĕ. Сăнавсем кăтартса панă тăрăх, юр айĕнче хĕл каçакан кашни йыш, омшаникрипе танлаштарсан, 4–5 килограмм ытларах пыл çисе пĕтерет, час-часах нозематоз, аскосфероз тата ытти чирсемпе аптăрать. Хĕл вĕçĕнче çавăн пек вĕллесенче нӳрĕлĕхпе тасамарлăх ӳсет. Ку вăл тул енчи сывлăш температури шалтипе пĕр пек пулманнипе çыхăннă. Температура хăвăрт улшăнни хуртсемшĕн питĕ сиенлĕ. Шартлама сивĕ кунсенче хуртсене ăшă нумай кирлĕ. Ăшă тытса тăма вара хуртсен апат ытларах çиме тивет. Çавăн пек чухне хĕллехи апат 2–3 хут нумайрах тăкакланать.

Хуртсем ăнăçлă хĕл каçасси йыш вăйĕпе те çыхăннă. Вăйсăр, 5–6 рамкăллă вĕллесенчи хуртсем, вăйлисемпе танлаштарсан (9–10 рамкăллисемпе), апат 20–30 процент ытларах пĕтереççĕ. 4–5 рамкăллă вĕллесенчи хуртсем пыл уйрăмах нумай çиеççĕ. Çавăн пек йышсене хĕл каçас умĕн пĕрлештерес пулать е вĕллесене фанерăпа урлă пӳлсе пĕр вĕллене икшер çемье вырнаçтармалла. Кун пек тусан начар йышлă çемьесем те пĕр-пĕрне хĕл тăршшĕпех ăшăтса ларса йĕркеллех аталанса каяççĕ.

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче 10 сехетре Красноармейскинчи тĕслĕх библиотекăра хурт-хăмăр ăстисен районсем хушшинчи наукăпа практика конференцийĕ пулать. Районти хурт-хăмăр ăстисем палăртнă вăхăтра унта пуçтарăнсан аван пулĕччĕ.

**А. СКВОРЦОВ,**
**Красноармейски районĕнчи хурт-хăмăр ăсти.**